# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## «Пурнăçа хаклама вĕрентĕм»

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн юн юхтарнă пиншер çын шутĕнче Хорнуй ял тăрăхĕнчи Мăн Шаптакра çуралса ÿснĕ Сергей Андреевăн **(сăн ÿкерчĕкре)** кукашшĕпе Василий Васильевпа асламăшĕн шăллĕ Иван Харитонов та пулнă. Кукашшĕ Курск пĕккинче 1943 çулта хыпарсăр çухалнă пулсан, Ленинград фронтĕнче çĕршыва хÿтĕленĕ Иван Харитонович фронтран сывă таврăнса 95 çулччен пурăннă. Кашни тĕл пулурах фронтовик вăрçăри йывăрлăхсене, салтаксен паттăрлăхне аса илнине Сергей ачаллах пĕрре мар илтнĕ. Вĕсем йывăрлăхсене епле чăтса ирттерни уншăн чăн паттăрлăх пулнă. Çавăнпа шкулта вĕреннĕ çулсенчех вăл фронтовиксем пек пулма тăрăшнă. Юлташĕсем умĕнче аслă ăрăвăн паттăрлăхне малалла тăсма тата ашшĕ пек гвардеец-салтак пулма (Валентин Ильич паян 91 çулта) сăмах панă.

Тăван çĕршыва юратакансен тĕслĕхĕпе воспитани илсе ÿснĕ качча пурнăç паттăрсен çулĕпех илсе кайнă. 1983 çулхи çуркунне 18 çул тултарнă С. Андреева районти çар комиссариачĕ пĕрремĕш призывпах салтака кайма повестка парать. «Тăвансем çара ăсатнă чух килтен Афганистана каятăп пулас тесе тухрăм. Çапла пулчĕ те. Пирĕн командăна Вăтам Азири Термез хулине илсе çитерчĕç. Апрель – июнь уйăхĕсенче карантинра пулнă чух хамăра Афганистана хатĕрленине ăнлантăмăр. Анчах приказран хăрани, пăрăнса юлас тени никамăн та пулмарĕ», – аса илет çамрăклăха Сергей Валентинович.

Присяга тытнă салтаксене июнь вĕçĕнче самолетпа Ташкентран Афганистанăн тĕп хулине Кабула куçараççĕ.

– Самолетран ансан йĕри-тавраri сăрт-ту куç умне тухрĕ. Кунтан пире 40-мĕш армин штабне сыхлакан тата пăхса тăракан уйрăм батальона илсе кайрĕç. Çакăнта манăн служба пуçланчĕ, – терĕ интернационалист-салтак. Кунпа пĕрлех вăл шăпа хăйне Афганистан вут-çулăмĕ витĕр кăларнишĕн пĕртте кулянманнине пĕлтерчĕ. «Кунта эпĕ çынна ăнланакан пултăм, хама темĕнле тарăхтарнă çынна та каçарма вĕрентĕм, çын пурнăçĕн хакне пĕлтĕм», – калаçăва малалла тăсрĕ вăл.

Афган вăрçине леknĕ ентеш хăйсем пĕрремĕш хут вут-çулăм айне лекнине те ĕнерхи пекех астăвать. Ун чухне вăл çĕрлехи нарядрачĕ. Сасартăк пульăсем çутă йĕр хăварса вĕçме пуçларĕç, унта-кунта минăсем çурăлаççĕ. Ун патне командир чупса пычĕ те сывăх йывăç хыçĕнчен тухмасăр тăма хушрĕ. Чылай вăхăтран вăрçă шавĕ лăпланчĕ. Ирпе вара салтаксем йĕри-тавра çулçă та йывăç турачĕ сапаланса выртнине курчĕç. Ун чухне çухату пулмарĕ. Кайранхи çапăçусенче юлташсем пуç хуни те, вĕсене шăп тăрса киле ăсатни те – салтак пурнăçĕн уйрăлми пайĕсем.

Пирĕн ентеш салтак аттипе хамăр çĕршывра 3 уйăх çÿренĕ хыççăн 25 уйăх Афганистанта интернационал тивĕçне пурнăçланă. Тăван киле таврăнсан мирлĕ ĕçе кÿлĕннĕ. Чылай çул Муркаш райповĕнче водительте вăй хунă. Мăшăрĕпе – Лариса Константиновнăпа – 2 ача çуратса ÿстернĕ, аслă пĕлÿ панă. Паян вĕсем 4 мăнукпа савăнса пурăнаççĕ.

– Афган вăрçинчи салтаксемпе офицерсен паттăрлăхĕ нихăçан та асран тухмĕ, манăçмĕ. Вăл паян çар ретне тăракансемшĕн – ыра тĕслĕх. Хальхи çамрăксем пирĕн ĕçе малалла тăсасса эпĕ шанатăп, – куçран тинкерсе калаçрĕ интернационалист-салтак вăрçă çулăмĕнчен тухайман юлташĕсемшĕн, вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн пăшăрханнине пĕлтерсе.



## Паттăрлăха упратпăр



**Пирĕн халăхăмăр Тăван çĕршывăн 1941 – 1945 çулсенчи вăрçинче Аслă Çĕнтерÿ тунăранпа кăçал 75 çул çитрĕ. Вăхăт иртнине пăхмасăрах фронтри салтаксен, тылри ĕçченсен паттăрлăхĕ манăçа тухмасть. Ăна ăруран-ăрăва куçарасси – çав паттăрсен мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем умĕнче тăракан тĕп тивĕç. Çакна шута илсе туса пыраççĕ те ĕнтĕ хăйсен кулленхи ĕçне ялсенчи библиотекарьсем.**

Ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотека та çÿлерех палăртнă çул-йĕртен пăрăнса юлмасть. Халăхпа ĕçлекен сектор ертÿçи Е. Тимофеева та **(сăн ÿкерчĕкре)** хăйĕн сăмахĕнче çакнах çирĕплетрĕ. Екатерина Валерьевна каласа панă тăрăх, кăçал библиотекăна çÿрекен вулавçăсемпе патриотика ыйтăвĕпе пысăк ĕç туса иртнерĕ. Çулталăк пуçланнăранпа кунта ĕçлекенсем район çыннисем валли пысăк стендсем, курăмлă альманахсем, видеопрезентацисем, акцисемпе онлайн акцисем, интернет-конкурссем, тĕрлĕ буклет тунă тата мастер-классем, виртуаллă экскурсисем, астăвăм сехечĕсем, вăрçă тематикипе çырнă кĕнекесен куравне, вулакансен конференцине ирттернĕ. Кунпа пĕрлех библиотекарьсем «Вилĕмсĕр полк» акци ирттернĕ çĕре, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин паттăрĕсене халалланă палăксене тирпейлеме хутшăннă, пурăнакан ветерансем патне çитсе килнĕ.

Паттăрлăхпа Астăвăм çулне хутшăнса Екатерина Валерьевна «Пысăк вăрçă – Аслă Çĕнтерÿ. Библиотека астăвăм вырăнĕ пулса тăни» патриот проекчĕпе Раççей конкурсне тухнă.

– Хамăн проектра эпĕ вулавăшра ĕçлекенĕн çамрăк ăру валли вăрçа хутшăннисен паттăрлăхне тата Аслă Çĕнтерĕвĕн пĕлтерĕшне туллин уçса памалли пирки калатăп. Паянхи вулавăш – истори пулăмĕсене упракан çăлкуç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçипе çыхăнтарсан, кăçал эпир вулакансемпе иккĕмĕш тĕнче вăрçин пĕлтерĕшлĕ çапăçăвĕсемпе тата пирĕн çарсен çĕнтерĕвĕсемпе анлă калаçусем ирттертĕмĕр. Кун пирки хамăн проектра анлăн каласа патăм. Çавăнпа пĕрлех района çуралса ÿснĕ, фронтра СССР Геройĕ тата Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ ятсене тивĕçнисемпе те паллаштартăм, – терĕ Е. Тимофеева хамăр тĕл пулăва вĕçлесе.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе**

## Тимлĕхе пурин те ÿстермелле

**Пушар хăрушлăхĕ çине çиелтен пăхакансемпе килĕшес килмест. Хамăр лăпкă вырăнта пурăннине пăхмасăрах, пирĕнтен кашниех асăрханманнине пула тата самантлăха тимлĕхе çухатнипе каялла тавăрма çук çухатусем патне çитме пултарать. Ытти çынсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни, вĕсем çав правилăсене сĕмсĕррĕн пăсни çине эпир пÿрне витĕр пăхни те нумай чух «хĕрлĕ автан» тухассипе хăратса-шиклентерсе тăрать. Çак пулăм пирĕн патăмăрта çеç мар, Раççей Федерацийĕнче те малти вырăнта. Ăна ура хурас тĕллевпе çĕршывра хăй вăхăтĕнче «Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен» Федераци Саккунне йышăннă. Вырăнти лару-тăрăва пăхсан, çакă пирĕн район лăпкăлăхĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.**

Калаçмалли нумай, чылайăшне хумхантаракан ыйтусем те самай. Чÿк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта кăçал пулнă 57 пушарта (пĕлтĕр – 55) 2 çын (3) пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ, 4 çын (5) тĕрлĕ сурансем илчĕ. Тухнă пушарсенче кăçал 7 миллион тенке яхăнлăх пурлăх кĕлленчĕ. Пĕрлехи тимлĕх пысăкрах пулнă пулсан, çухатусен пĕр пайĕнчен пăрăнса иртме пулатчĕ.

Инкек тухнă вырăнсене илсен, 57 пушартан 32-шĕ граждансен килти хушма хуçалăхĕсенче пулчĕ. Çапла вара кĕске тапхăрта ялсенче пурăнмалли 6 çурт (пĕлтĕр – 12) тата 26 (16) хушма хуралтăпа мунча кĕлленчĕç.

Мĕнрен вăй илет-ха пушар?

Инкек хыççăнхи тĕпчевсем çакна çирĕплетеççĕ. «Хĕрлĕ автан» ытларах чухне çулăмпа асăрханусăр пулнинчен 24 (28), электрооборудованипе усă курас йĕркене пăсниnчен тата вĕсене вырнаçтарас правилăсене пăхăнманнинчен 8 (11), юри вут тивертнинчен 2(3), кăмакасем тăвас тата усă курас йĕркене пăсниnчен 14 (8), ачасем шăрпăкпа вылянинчен 4(0) вăй илет.

Ирĕке кайнă вут-çулăмра кăçал ачасемпе çамрăксен пурнăçĕ татални пулмарĕ. Анчах ачасем шăрпăкпа вылянинчен тухнă пушарсен пурне те сисчĕвлентермелле. Нумай ачаллă тата йывăр лару-тăрулла çемьесем районта сахал мар. Çакна шута хурса халăх хушшинче пушар хăрушсăрлăхне пропагандăлассипе тĕллевлĕрех ĕçлемелли ума тухать.

Пушара сÿнтериччен ăна асăрхаттарма çăмăлрах тени çĕнĕлĕх мар. Пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнни тата инкек пирки пушар хуралне çийĕнчех пĕлтерме пултарни, инкек тÿсекенсем патне пулăшу вăхăтра çитни çухатусене самай пĕчĕклетет.

Яваплă специалистсем çынсемпе вырăнсенче тата ĕç коллективĕсенче пушар хăрушсăрлăхĕпе вăхăтра инструктажсем ирттерни, инкек вăхăтĕнче хăйсене епле тытмаллине, мĕн тумаллине вĕрентни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине пурин те асра тытмалла.

Пирĕн тăрăхра час-часах пулакан тепĕр инкек вăл – çынсем тĕрлĕ сăлтавпа шыва путса пурнăçран уйрăлни. 2019 çулта кунашкал инкексем пирĕн район территорийĕнче 2 (вĕсенчен пĕри 10 çулхи ача) пулнă пулсан, кăçал ку кăтарту 11 тĕслĕхе (пĕр ача 9 çулта) çитрĕ. Ачасем шыва кĕнĕ чух юнашар аслисем е ашшĕ-амăшĕ пулманни инкеке çул уçни палăрчĕ. Аслисемпе çыхăннă инкексен тĕслĕхĕсенче вара вĕсем эрех ĕçсе шыва кĕни малти вырăна тухрĕ.

Хĕл сиввисем çывхарнă май юханшывсемпе пĕвесем çÿхе пăрпа витĕнчĕç. Çавăнпа та çак вăхăтра ачасем пăр çине ярăнма-выляма кĕрсе каясран аслисен уйрăмах тимлĕ пулмалли пирки аса илтеретĕп.

Аслисен те çÿхе пăр çине кĕресрен асăрханмалла. Ахальлĕн каялла тавăрмалла мар инкек патне пырса тухма пулать. Унран пăрăнма çакнашкал сĕнÿсем пур:

– пăр çине кĕнĕ чух унăн çирĕплĕхне тĕрĕсле;
– пăр çинче çынсем утнă çулпа пыр;
– пăр çурăлса сасă парсан е вăл авăнма пуçласан пĕр тăхтаса тăмасăр каялла тух;
– пĕр вырăнта çынсем кĕпĕрленсе тăрассинчен асăрхан;
– йĕпе-сапара пăр çине ан кĕр;
– пăр каталнă вырăна ан пыр, катăк пăр çинче ан ярăн.

**В. ГРИГОРЬЕВ,**
**район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ.**